27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ОКТЯБРЬ 29 ВЫРСАРНИКУН 214(6709) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ял Совечĕпе унăн депутачĕсем

Ялта государство влаçĕн органĕ ĕççынни депутачĕсен ял Совечĕ пулса тăрать. Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 51-мĕш статьинче государство влаçĕн вырăнти органĕсен задачисене çакăн пек палăртса каланă: «Ĕççынни депутачĕсен (район, хула, поселок тата ял) Совечĕсем хăйсен территорийĕнче культурăпа политика тата хуçалăх строительствине ертсе пыраççĕ, вырăнти бюджета тăваççĕ, хăйсене пăхăнса тăракан управлени органĕсен ĕçĕсене ертсе пыраççĕ, государство йĕркелĕхне сыхласа тăраççĕ, çĕршывăн оборона хăватне ӳстерме пулăшаççĕ, законсене тĕрĕс тытса пырассине тата граждансен прависене сыхлассине пурнăçлаççĕ».

Çак задачăсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче татах та ытларах ӳсрĕç. Ял Совечĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне вăрçă кăларса тăратнă задачăсене пăхăнтармалла пулчĕ. Ĕç чылай йывăрланчĕ, кăткăсланчĕ. Ял Совечĕсен нумай депутачĕсем алла хĕçпăшал тытса, Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен ретне тăчĕç. Чылай çĕрте ял Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем хутшăнчĕç. Çавăн пекех ял Совечĕсем тавра пĕтĕçсе тăракан актив та тĕпрех çĕнелчĕ. Çакă вăл, пĕр енчен, ял Совечĕсен кулленхи ĕçне çĕнĕ сывлăш кĕртрĕ, çав вăхăтрах ĕçе сахалтарах опытлă çынсем хутшăнни хăйне май йывăрлăхсем те кӳчĕ. Çав актива советсен массăллă-организациллĕ ĕçне вĕрентес уйрăм задача тухса тăчĕ.

Ял Совечĕпе унăн депутачĕсем çинчен сăмах хускатрăмăр пулсан, вĕсен тĕп ĕçĕ ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек пурнăçа кĕртсе пырасси пулать. Çав задачăсем вĕсем пирĕн государство вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм ялхуçалăхĕ умне лартакан хуçалăхпа политика ыйтăвĕсенчен тухса тăраççĕ.

Ял Совечĕ тата, чи малтан, унăн ĕç тăвакан комитечĕ, çав пысăк задачăсене нумай тĕрлĕ майсемпе усă курса пурнăçа кĕртсе пырать. Ял Советне государство пысăк правăсем панă. Унăн аллинче администрациллĕ власть пур, çавăн пекех вăл ĕççыннисемпе куллен çыхăнса тămалли нумай тĕрлĕ организациллĕ майсемпе те усă курма пултарать.

Государство влаçĕн ялти органĕ пулса тăрса, ял Совечĕн, пуринчен малтан, хăйĕн территорине кĕрекен колхозсен ĕçне куллен контрольлесе тата пулăшса тăмалла. Партипе правительство постановленийĕсене, совет законĕсене, государство умĕнчи обязательствăсене, çӳлте тăракан власть органĕсем панă нарядсене колхозсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынипе ял Совечĕн уйрăмах тимлĕн интересленмелле.

Çак ĕçсене пурнăça кĕртнĕ чухне ял Совечĕн хăй аллинчи администрациллĕ влаçăн вăйне массăллă-ăнлантарулла ĕçĕн вăйĕпе таччăн пĕтĕçтерсе пыма пĕлес пулать. Çавăн пек тусан кăна ялти ĕççыннисене хуçалăхпа политика задачисене пурнăça кĕртнĕ çĕре активлăн мобилизацилеме пулать. Умра тăракан задачăна тĕплĕн ăнлантарса памасăр, пĕр администрациллĕ мерăсем йышăннипе кăна ĕç ăнăçлă пыма пултараймасть. Çавăн пекех законлă влаçăн вăйне сӳреклетни те пулмалла мар. Массăллă-ăнлантарулла ĕçĕн результачĕсене законсен вăйĕпе çирĕплетсе пыни кирлĕ. Ял Совечĕ ялта, колхозра çирĕп йĕрке тытса пыма тивĕçлĕ, унсăрăн ĕçĕн уйрăм участокĕсенче йĕркесĕрлĕхсем сиксе тухма пултараççĕ.

Хăйĕн территорине кĕрекен колхозсем лайăх ĕçлетчĕр тет пулсан, ял Совечĕ ялхуçалăх артелĕсен шалти пурнăçĕпе те: колхозсенче Сталинла Устав, агротехника правилисене мĕнле пурнăça кĕртсе пынипе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле аталанса пынипе тата ытти нумай тĕрлĕ ĕçсемпе интересленме тивĕçлĕ. Анчах ку, паллах, колхоз правленийĕн вырăнне йышăнса илессине пĕлтермест. Пачах та урăхла, ял Совечĕн хăйĕн контролĕпе тата пулăшăвĕпе колхоз правленийĕн авторитетне, унăн ертсе пырас вырăнне ӳстерессишĕн тăрăшмалла. Çак ĕçе ял Совечĕ хăйĕн депутачĕсемпе актив урлă туса пырать.

Вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм ял Совечĕн задачисем ӳснĕ май унăн депутачĕсен ĕçĕсем те нумай пысăкланчĕç, йывăрланчĕç. Ял Совечĕн депутачĕ вăл — халăх хăйĕн ялти власть органне шанса суйланă çын пулса тăрать.

Сталин юлташ 1937 çултах суйлав умĕн каланă хăйĕн сăмахĕнче çапла кăтартса панăччĕ: «Депутат çакна пĕлме тивĕç: вăл халăх тарçи: унăн хăйне халăх панă наказ тăрăх тытмалла», тенĕччĕ. Çапла, халăх тарçи пулса тăрса, депутатăн пĕтĕмпех халăх интересĕсемшĕн тăрăшмалла.

Пирĕн республикăра нумай ял Совечĕсемпе вĕсен депутачĕсем хăйсен задачисене кирлĕ пек ăнланса тăраççĕ. Республика хуçалăхпа политика задачисене çулран çул ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынинче, пирĕн колхозсем çулран çул вăйлă тырпул туса илнинче, вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пынинче, паллах, ял Совечĕсен ĕçĕ те палăрса тăрать. Вырăнти Советсен практикинчен паха тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать.

Нумаях пулмасть, Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, малта пыракан ял Советсен опытне пăхса тухса, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ольтикасси, Çĕрпӳ районĕнчи Вĕрмер, Чурачăк районĕнчи Янчеллă ял Совечĕсен ĕçне лайăх енĕпе палăртрĕ, вĕсене Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме кандидата тăратрĕ. Çав ял Совечĕсен исполкомĕсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек тĕпренех урăхлатса йĕркеленĕ, ĕççыннисене партипе правительство тыла çирĕплетес тата фронта пулăшас тĕлĕшпе лартнă задачăсене пурнăçлама мобилизациленĕ. Вĕсен председателĕсем колхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттернĕ çĕрте ял Совет исполкомĕсен председателĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăма тивĕçли çинчен Калинин юлташ кăтартса панине тĕрĕс ăнланса илнĕ.

Сăмахран, Вĕрмер ял Совет исполкомĕн председателĕ Елисеева юлташ колхозсенчи кашни ĕçпе куллен интересленсе тăрать. Пĕр-пĕр колхозра çитменлĕхсем палăрсан, пĕр-пĕр колхоз кая юлма пуçласан, çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнать. Ял Совет исполкомĕн ларăвне е актив канашлăвне пухса, ыйтăва тĕплĕн сӳтсе явать. Çапла, унта «Планета» колхоз тырпул пухса кĕртес ĕçре кая юлма пуçланă. Çак ыйтăва çийĕнчех пăхса тухса, ял Совет исполкомĕ колхоза ĕçлĕ пулăшу панă. Колхозниксем ĕçе ирттерех тухмалла тунă, колхозри столовăй ĕçне лайăхлатнă, çĕрле авăн çапассине организациленĕ, ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илме пуçланă. Çавăн хыççăн вара колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ ӳснĕ, колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ, государство умĕнчи парăмсене те вăхăтра парса татнă.

Анчах пирĕн ял Совечĕсем хушшинче урăхларах тĕслĕхсем те тупăнаççĕ. Акă, сăмахран, Çĕмĕрле райисполкомĕнчи çынсем Хутар ялсоветне лайăх ĕçлекен ял Совечĕ тесе шутлаççĕ. Çывăхарах пырса пăхсан, ĕç пачах та апла мар.

Хутар ял Совет исполкомĕн нимĕнле ĕç планĕ те çук. Вăл мĕнле май килнĕ, çапла ĕçлет. Ял Совечĕ актива мар, хăйĕн депутачĕсене те кирлĕ пек ертсе пымасть. Исполком ларăвĕсене ăнсăртран та сайра-хутра кăна пухаççĕ. Ял Совет исполкомĕ 1944 çулта пĕтĕмпе 6 лару туса ирттернĕ. Конституци тăрăх, ял Совечĕн сессийĕсене уйăхра пĕрре пухмалла. Кунта Конституцие пăхăнмаççĕ, ял Совечĕн сессийĕсене 1940 çултанпа кăçалччен пĕрре те пухман, кăçал тин пĕр хутчен пухса ирттернĕ. Ял Совет исполкомĕн председателĕ Фадеев юлташ пĕтĕм ĕçе пĕчченех туса пыма пултаратăп тесе шутлать, анчах кунта пĕр ĕç те ăнăçлă пулса пымасть, пулма та пултараймасть.

Мĕне кура-ха ĕнтĕ райисполком çак ял Совечĕн ĕçне лайăх тесе шутлать? Мĕншĕн тесен, советсен вырăнти органĕсем мĕнле ĕçленине пĕлмест, пĕлме те тăрăшмасть. Çакăн хыççăн ĕнтĕ Çĕмĕрле районĕ хуçалăхпа политика задачисене пурнăça кĕртес ĕçре кая юлса пынинчен тĕлĕнмелли те çук.

Ял Совечĕсен хуçалăхпа политика кампанийĕсене ирттернипе, государство умĕнчи тырпул обязательствисене, ял бюджетне пурнăça кĕртсе пынипе пĕрлех, ялти культурăллă учрежденисен — шкулсен, больницăсен, вулав çурчĕсен, клубсен, библиотекăсен ĕçĕпе те интересленмелле. Ялти хуçалăха, çулйĕрсемпе кĕперсене, укăлча картисене, пушартан сыхланмалли хуçалăха йĕркеллĕ тытассишĕн тăрăшмалла.

Паллах, çак йывăр та кăткăс задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесен, ял Совечĕн хăйĕн депутачĕсемпе актив çине таянса ĕçлемелле. Советсен яланлăх комиссийĕсем чылай çĕрте хут çинче кăна шутланса тăраççĕ. Вĕсене тĕрĕс ĕçлеттерсен, ял Совечĕн ĕçĕ мĕн чухлĕ çăмăлланнă тата мĕн тери малалла кайнă пулĕччĕ.

Уйрăм райисполкомсем хăйсен вырăнти органĕсене пачах та çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Нумай çĕрте яла уполномоченнăйсем янипе лăпланса лараççĕ. Тепĕр уполномоченнăй яла пырать те, ял Совет исполкомĕн ответлăхĕпе авторитетне ӳстерес вырăнне, ял Совет председателĕ вырăнне ĕçлеме тытăнать, «командăлама» пуçлать. Команда парса ларни мар, пулăшни, ял Совечĕн ответлăхне ӳстерни кирлĕ.

Ял Совечĕсем умĕнче хальхи вăхăтра пысăк задачăсем тăраççĕ. Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлемелле, государство умĕнчи пур парăмсене те парса татассине, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлесе çитерессине организацилемелле. Ĕçсем пысăк та ответлă. Çав ĕçсене тума райисполкомсен, парти райкомĕсен ял Совечĕсене çине тăрса пулăшас пулать; ял Совечĕсен кадрĕсене, уйрăмах çамрăккисене, куллен тимлĕн вĕрентсе пырас пулать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нумай ачаллă амăшĕсене „Ача амăшĕ—героиня" тенĕ хисеплĕ ят парасси çинчен

Вунă ача тата ытларах та çуратса пăхса ӳстернĕ çак амăшĕсене, «Ача амăшĕ — героиня» ятлă орденпа тата СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотипе наградăласа, «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ят парас:

1. Анна Савельевна Алексахинăна — Мускав облаçĕнчи Пушкино районĕнчи Мамонтовка поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
2. Мария Платоновна Аркадьевăна — Ленинград облаçĕнчи Тихвин районĕнчи Бокситогорск поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
3. Валима Гильмановна Асадуллинăна — Пушкăрт АССР-ĕнчи Чишмы районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.
4. Анисья Михайловна Белоусовăна — Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи Подберезниково колхозĕнчи колхозницăна.
5. Магиравза Ахматзяновна Биктимировăна — Тутар АССР-ĕнчи Дубьязски районĕнчи «Кзыл Байрак» колхозри колхозницăна.
6. Татьяна Сергеевна Бубановăна — Свердловск облаçĕнчи Верхне-Пышминск районри торфоснаб столовăйĕнче ĕçлекен работницăна.
7. Ксения Ивановна Зотовăна — Тутар АССР-ĕнчи Тетĕш районĕнчи «Верный путь» колхозри колхозницăна.
8. Серафима Васильевна Игнатьевăна — Ленинград хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
9. Анна Сергеевна Кириллинăна — Калинин облаçĕнчи Новоторжок районĕнчи «Первое мая» колхозри колхозницăна.
10. Мария Максимовна Рыжковăна — Тула хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
11. Мария Егоровна Смагинăна—Мускав хулинчи Киров районĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
12. Евдокия Павловна Солдатовăна — Горький облаçĕнчи Шатки районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.
13. Евдокия Ивановна Трофимовăна — Калинин облаçĕнчи Калинин районĕнчи «Первое мая» совхозри работницăна.
14. Феодора Николаевна Филипповăна — Ленинград облаçĕнчи Кингисеп районĕнчи «Трудовик» колхозри колхозницăна.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1944 çулхи октябрĕн 27-мĕш

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем Хĕвелтухăç Пруссире ШТАЛЛУПЕНЕН хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вăйлă çапăçнă хыççăн нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ КИШЕН, ПАТИЛЬЖЕН, ЭЙСКЕМЕН ятлă опорнăй пункчĕсене туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, октябрĕн 27-мĕшĕнче Чехословаки республики çĕрĕнче Карпат леш енчи Украинăн тĕп хули пулса тăракан УЖГОРОД хулине — çулйĕрсен пысăк узелне тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, Чехословаки республики çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БЕРЕГОВО хулипе чугун çул станцийĕ, СТАРИНА, УЛИЧ, ЗАРИЧОВ, ПЕРЕЧИН, СЕРЕДНЕ, КОМОРОВЦЕ, ЗНЯЦЕВО, ВЕЛИКИЕ ЛУЧКИ, ГОРОНДА, МАЛОЕ ГУТОВО, ВЕЛИКОЕ ГУТОВО ятлă пысăк ялсем тата МАЛОЕ БЕРЕЗНЕ, ДУБРИНИЧ, ПЕРЕЧИН, СТРАБИЧОВО, БОРШАВА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Венгри çĕрĕнче САТУ-МАРЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, ДАРОЦ, ШАТМАРЧИКИ, КИШ-АР, ФЕХЕР-ДЬЯРМАТ, МАТОЛЧ, ДЬЕРТЕЛЕК, НАДЬ-ЕЧЕД, ГЕБЕ, НЬИРЧАСАРИ, НЬИР-ВАШВАРИ ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

НЬИРЕДЬХАЗА хули районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

Югослави çĕрĕнче БЕЛГРАД хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, НОВИСАД хулипе чугун çул узелне, КУЛА хулипе чугун çул узелне, БАЧКА ПАЛАНКА хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата СТАПАР, ВЕПРОВАЦ, ИРИГ, ИНДИЯ, СТАРА ПАЗОВА, ПЛАТИЧЕВО, ОГАР ятлă ялсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 128 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БУДАПЕШТ ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Октябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Венгри столицине Будапешт хулине йышлăн вĕçсе кайса тапăннă.

Будапештри çар промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем нумай тухнă, вĕсенчен вуннăшĕ питĕ вăйлă пулнă. Пушарсенче взрывсем пулнă, уйрăмах вăйлă взрывсем кивĕ крепость, вокзал, главнăй таможня районĕнче тата хулан кăнтăрти пайĕпе хĕвеланăç пайĕнче пулнă.

Пушар сулăмне пирĕн летчиксем Будапештран 200 километр ытла каялла вĕçсе килсен те курнă.

☆ ☆ ☆

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем тăшманпа çаплах вăйлăн çапăçнă. Чылай участоксенче нимĕçсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем контратакăсем тунă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшман контратакисене сирсе янă та, малалла куçса пырса, гитлеровецсене темиçе ялтан хăваласа кăларнă. Пĕр районра нимĕçсем малтан пирĕн чаçсен çапăçури речĕсем хушшине сăвăлланса кĕрсе кайнă пулнă. Совет пехотинецĕсем, гитлеровецсене флангсенчен çав тери вăйлăн пырса çапса, вĕсен каялла чакмалли çулĕсене татнă та сăвăлланса кĕрсе кайнă нимĕçсене пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Кун каçиччен пирĕн çарсем 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 95 танк, 11 бронетранспортер тата 100 автомашина ытла персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Тăшмана Мукачево хули районĕнче аркатса тăкнă хыççăн совет танкĕсемпе мотопехоти малалла Карпат леш енчи Украинăн тĕп хули пулса тăракан Ужгород патнелле çав тери хăвăрт кайнă. Тăшман Ужгород хулинчен 15 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Середне ятлă пысăк ялта шоссе çулĕ хĕринче çирĕпленсе ларнă та пирĕн çарсене малалла кайма чарма хăтланнă. Пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен чаçсем пĕр чарăнмасăрах Середне ялне вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн танксемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнине пула, гитлеровецсем нумай хирĕç тăрайман, вĕсем ним йĕрки-паллисĕр каялла чакнă, хĕçпăшал тата вăрçă хатĕрĕсем нумай пăрахса хăварнă. Малалла куçса пырса, совет чаçĕсем Ужгород хули патне пырса тухнă. Хуларан айккипе пырса иртсе кайса, совет танкисчĕсем тăшманăн хулари гарнизонĕн каялла чакмалли çулĕсене татнă та хула урамĕсене вăркăнса кĕнĕ. Пирĕн ытти чаçсем тăшманăн Карпат тăвĕсен кăнтăр енче ларакан Перечин ялĕнчи тĕреклетнĕ пысăк пунктĕнче çирĕпленсе ларнă гарнизонне аркатса тăкнă та Ужгород хулине çурçĕр енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Хула урамĕсенче хаяррăн çапăçнă хыççăн Ужгород хулине венгер захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Кун каçиччен нимĕçсемпе венгерсен 2.500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Нумай хĕçпăшал тата боеприпаспа ытти çар пурлăхĕн склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Сату-Маре хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем 15 километр малалла кайнă та Киш-Ар ятлă пысăк яла туртса илнĕ, çав ялшăн пынă çапăçура тăшманăн икĕ ротине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсемпе венгерсем темиçе хутчен те контратакăна кĕре-кĕре кайнă. Пĕр соединени боецĕсем, артиллерипе танксем пулăшнипе, тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Пирĕн позицисем çине пырса кĕмелли вырăнсенче гитлеровецсен 800 вилли ытла выртса юлнă тата çунса кайнă 15 танк тăрса юлнă.

Венгри çĕрĕнче пĕр районра пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен чаçсем аэродрома вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманăн 70 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр флочĕн карапĕсем Варде портне тата çав порт районĕнчи çар сооруженийĕсене пенĕ. Порт территорийĕнче пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Варенгер çурутравĕ патĕнче нимĕçсен 2.000 тонна таякан транспортне, хурал карапне, хăй тĕллĕн çӳрекен десант баржине тата 4 мотоботне шыва путарнă. Унсăр пуçне тата тăшманăн ытти темиçе суднине сиенленĕ. Сиенленĕ транспортсенчен пĕри, 5.000 тонна таяканскер, шыв хĕррине тухса ӳкнĕ.

* * *

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен транспортне путарнă. Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ.

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейи

Виçĕ кунхи итогсем

Республикăра укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене 1944 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 36.008 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 6.150 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 29.858 пин тенкĕлĕх сарнă.

Лотерея билечĕн укçине колхозниксем хушшинче 16.769 пин тенкĕ пухнă. Билетсене сарас тата билет укçине пухас тĕлĕшпе Октябрьски, Вăрмар, Тăвай, Канаш, Муркаш районĕсем малта пыраççĕ. Çав вăхăтрах Шăмăршă, Калинино, Элĕк, Вăрнар, Кувакино районĕсенче лотерея билечĕсене сарасси тата уйрăмăнах билет укçине пухасси çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пырать-ха. Асăннă районсенчи партипе совет тата комсомолпа профсоюз организацийĕсен лотерея билетне сарас ĕçе вăйлатас пулать.

Колхозниксем лотерея билечĕсене активлăн çырăнса илеççĕ

ЕТĔРНЕ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Пур колхозсенче те лотерея билечĕсене çырăнасси ăнăçлăн иртсе пырать. Паянхи кун тĕлне колхозниксемпе колхозницăсем лотерея билечĕсене 1.010 пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ, билет укçине 600.000 тенкĕ тӳленĕ. Нумай колхозсем лотерея билечĕн укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 60.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех тӳленĕ. Палтайри, Кĕçĕн Кумаркинăри колхозсем те билет укçине парса татнă.

Предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем чылайĕшĕ лотерея билечĕсене уйăхри ĕçукçин 25 проценчĕ чухлĕ тата ытларах та çырăнчĕç. Районри больница коллективĕ уйăхри ĕçукçин 30 проценчĕ чухлĕ çырăнса илнĕ.

Халĕ финанс работникĕсем, партипе совет организацийĕсем пулăшнипе, билет сарас ĕçе вăйлатса пынипе пĕрлех, укçа пухассине хăвăртлатма тăрăшаççĕ.

А. АЛЕКСАНДРОВА.

Вăрманта ĕçлекенсен сăмахĕ

ВАРНАР, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманпромхозра ĕçлекенсем укçапа япаласен лотерея билечĕсене кĕске вăхăтрах 16.600 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Чылай рабочисем лотерея билечĕсене уйăхри ĕçукçин 30 проценчĕ чухлĕ туяннă. Билетсем туянман рабочисемпе служащисем пачах та юлман.

Болгарипе перемири тăвасси çинчен калаçни

Октябрĕн 26-мĕшĕнче Мускавра Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем Болгарипе перемири тăвасси çинчен Болгари Правительствин представителĕсемпе калаçма пуçланă. Калаçусене çаксем хутшăннă: Совет Союзĕ енчен — В. М. Молотов, А. Я. Вышинский, В. А. Зорин, К. В. Новиков, А. А. Лаврищев, генерал-полковник А. С. Желтов тата контр-адмирал Н. С. Абрамов; Великобритани енчен— Посол Керр господин тата Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс районĕнчи Верховнăй Командующийĕн представителĕ генерал-лейтенант Д. Гаммелль; Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем енчен — США Еçĕсен Поверенийăйĕ Кеннон господин.

Болгари представителĕсем пулса, калаçусене Болгари Правительствин çак уполномоченнăйĕсем хутшăннă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ П. Стайнов господин, портфельсăр Министр Д. Терпешев господин, портфельсăр Министр Н. Петков господин тата Финанс Министрĕ П. Стоянов господин.

Перемири пирки пухăннă конференцин пĕрремĕш ларăвĕнче Болгари Делегацийĕн Председателĕ—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ П. Стайнов çакăн пек заявлени вуласа панă:

«Болгарири Отечественнăй фронт Правительствин делегацийĕ Сирĕн пата перемири тума ыйтмашкăн питĕ хумханса килчĕ. Вăл Болгарин ĕлĕкхи режимĕ тунă йăнăша йышăнать. Çав режим вăл Болгари ячĕпе халăха хирĕç пыракан политикăна тытса пынă. Вăл, Хĕвеланăçĕнчи аслă демократисене хирĕç нимĕнпе те тӳрре кăларма çук вăрçă пуçласа ярса, хамăр территори урлă кӳршĕри государствăсене тапăнма парса тата чыссăр оккупаци туса, пысăк преступлени турĕ. Ĕлĕкхи режим вăл çакăн пек хăтланчĕ: нейтралитетла пула хăй çине илнĕ тĕп обязанноçсене пăсса пырса, вăл пире ирĕке кăларакан çĕршыва та хамăра хирĕç вăрçă пуçлаттарчĕ, Болгари правительстви тунă пысăк преступлени пĕтĕм халăх çине ӳкет.

Анчах та çав халăх вăл хăйĕн никам лартман хуçисем тата çав хуçасен хуçисем—нимĕçсем тунă преступлени çине алла усса пăхса тămарĕ. Вăл вĕсене хирĕç кĕрешме пуçларĕ. Йышлă жертвăсем тӳснĕ енчен, юн нумай тăкнă енчен пăхсан, çав кĕрешӳ вăл Гитлер çарĕсем пусмăрласа пурăннă тата оккупациленĕ нумай çĕршывсен асапĕсенчен кайра тămасть. Анчах та пирĕн халăхăн историйĕнчи çак юнлă страница çинчен ют çĕршывсенче ытла та сахал пĕлеççĕ. Çав кĕрешӳ вăл пирĕн çĕршыври ялсемпе хуласенче питĕ пысăк йĕр хăварчĕ. Шăп çав кĕрешӳ ĕнтĕ юлашкинчен Болгари халăхĕпе унăн армине пĕтĕм халăхăн восстанине пуçласа яма вăй пачĕ. Совет Союзĕн тата унăн аслă союзникĕсен—Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕсем нимĕçсене аркатса тăкас ĕçре тунă çитĕнӳсене пула, Болгари инкек кӳрекен преступникла фашистла диктатурăн сăнчăрĕсене татса пăрахрĕ те чăн-чăн халăх тытăмĕ туса хума пултарчĕ. Отечественнăй фронт Правительстви çавăн пек тытăм пулса тăрать те ĕнтĕ.

Отечественнăй фронтра пĕрлешнĕ халăх государство тытăмне хăйĕн аллине илчĕ. Вăл пĕтĕм государство аппаратне тасатма тытăнчĕ çеç мар, вăл тата тулашрипе шалти политика тĕлĕшĕнчен пирĕн çĕршыва йăлтах урăхла çул çине кăларса тăратрĕ. Çав çула пирĕнпе кӳршĕллĕ государствăсем тата аслă государствăсем шанса пăхма пултараççĕ. Болгари патшалăхĕн тытăмĕнчи çак тĕп улшăну вăл ку хутĕнче халăх хăйĕн çĕршывĕн чăн-чăн хуçи пулса тăма пултарнине пула пулчĕ.

Пирĕн халăх демократиллĕ халăх, мире тата ирĕклĕхе юратакан халăх. Вăл хăйĕн кӳршисемпе лайăх та питĕ туслăн пурăнасшăн. Вăл Хĕвеланăçĕнчи демократисене калама çук хытă хисеплет, çав демократисене пула унăн культури чи паха пуянлăхсем туяннă. Вăл тата хăйне ирĕке кăларакан çĕршыва — Совет Союзĕнчи халăхсене çав тери хĕрӳллĕн юратать, вĕсене чунтан-чĕререн тав тăвать.

Шăп çакна пула ĕнтĕ унăн çĕнĕ влаçĕ—Отечественнăй фронт Правительстви, хăйне кунта чĕнессине кĕтсе тămасăр (кунта вара Эсир пире мĕн тумаллине кăтартса панă пулăттăр), хăйĕн ирĕкĕпех пирĕн государствăна этемлĕхе хирĕç преступлени тума тĕртнĕ çынсене—гитлерла Германипе союзлă пулса вăрçă пуçлама, Болгари влаçĕсем йышăннă кӳршĕри территорисенче çав тери ирсĕр ĕçсем тума тата, юлашкинчен, хăйне ирĕке кăларакан çĕршыва тав тăвас вырăнне ăна çав тери пысăк сиен тума тĕртнĕ çынсене айăпласа наказани пама пуçларĕ. Халĕ ĕнтĕ, Эсир пире кунта чĕнсе илнĕ вăхăтра, пирĕн урлă пирĕн ĕлĕкхи пуçлăхсемпе усал çынсен, болгар халăхĕн ятне вараланăскерсен тата ăна намăса кăларнăскерсен, ĕçĕсене сивлемешкĕн чĕнсе килнĕ вăхăтра, пĕтĕм халăх ятлакан çав преступниксене, халăх сучĕ айăплĕ. Сире çакăн пирки шантарса калама пултаратăп: халăх хĕçĕ вĕсене пурне те пĕр шеллемесĕр вакласа тăкĕ.

Юлашкинчен эпĕ сире тата çакăн çине çавăрăнса пăхтарасшăн (ăна та Болгарире улшăну пулнипе çеç ăнлантарса пама пулать). Отечественнăй фронт Правительстви, Эсир йышăнас приговор ăна Германипе çыхăну тытма пăрахтарассине кĕтсе тămасăр, Гитлерăн хамăр çĕршыври çарĕсене хирĕç пирĕн халăх хăех партизансем урлă тахçанах пуçласа янă хĕçпăшаллă кĕрешĕве малалла аталантарса пырса, нимĕç захватчикĕсене Балканран хăваласа кăларассишĕн Германие хирĕç вăрçă пуçларĕ те халĕ унпа хаяррăн çапăçать. Çамрăк болгар боецĕсен çĕнĕ питĕ йышлă вилтăприсем пирĕн нумай асап тӳснĕ кӳршĕн—Югославин чул тăвĕсене витсе тăраççĕ, унăн тустарса пĕтернĕ улăхĕсенче çамрăк болгарсем çĕнĕрен нумай юн юхтарнă, вăл юн аслă Сталин маршалпа хастарлă Тито маршалăн тăванла халăхĕсем тата аслă союзниксен çарĕсем халь юхтаракан юнпа хутшăнса кайнă. Хăйĕн çамрăк ывăлĕсене тата хăйĕн вăй-халне демократин вараланă ĕçне çиеле кăларассишĕн парса çеç Болгари халăхĕ пĕтĕм тĕнчене, чи малтан аслă союзниксене, çакна кăтартса парасшăн: вăл ĕлĕкхи преступникла пуçлăхсем хăйĕн питне вараланине хăйĕн юнĕпе çуса тасатма хатĕр. Сирĕн умăрта çав халăхăн представителĕсем пулса тăратпăр та ĕнтĕ эпир — Болгари правительствин делегачĕсем. Эпир Сирĕн приговора итлеме килтĕмĕр. Айăплăр пире! Эпир Сирĕн приговор тĕрĕслĕхлĕ пулассине Сирĕн ĕçĕр тĕрĕслĕхлĕ пулнине ĕненнĕ пекех ĕненетпĕр».

Çак декларацие вуласа панă хыççăн Совет Делегацийĕн Председателĕ—СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов çапла каланă: Союзлă Правительствăсен представителĕсем Болгари Делегацийĕн Председателĕн сăмахне питĕ тимлĕн итлерĕç, тенĕ. В. М. Молотов тата çапла каланă: Болгари Делегацийĕн декларацийĕ çинчен Совет Делегацийĕ хăйĕн Правительствине пĕлтернĕ тенĕ тата Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем те ун çинчен хăйсен Правительствисене пĕлтерĕç, тесе шанса каланă. Великобритани представителĕ — Посол Арчибальд Керр тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕ — Еçсен Поверенăйĕ Кеннон господин Болгари Делегацийĕ вуласа панă деклараци çинчен хамăр правительствăсене пĕлтерĕпĕр тесе каланă. (ТАСС).

Кĕтнĕ кун çитрĕ

Этем кĕтме юратать. Пур чухне те этем хăйĕн шухăшĕсем пурнăça кĕрессине кĕтет. Совет çыннисем нумай пулмасть мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕç вăрă-хурахĕсене хамăрăн Тăван çĕршывран хăваласа кăларассине кĕтсе пурăнатчĕç. Кĕтнĕ ĕмĕт пурнăça кĕрсе пырать. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар хамăрăн çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатса çитерет кăна мар, хамăрăн чикĕ урлă каçса, тăшман йăвине çĕмĕрсе кĕчĕ. Çак чаплă куна совет халăхĕ виçĕ çул ытла кĕтсе пурăнчĕ. Халĕ çав çутă та таса ĕмĕт пурнăça кĕчĕ ĕнтĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар воинĕсем ирсĕр тăшмана хăйĕн йăвинчех пĕтерсе тăкма тытăнчĕç.

Совет çыннисем Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернине кунсеренех тулли кăмăлпа савăнса вулаççĕ: Ширвинг, Эйдткунен, Гольдап, Шталлупенен... Кусем пуçламĕшĕ кăна-ха, çитес кунсенчех эпир совет воинĕсем Хĕвелтухăç Пруссири ытти хуласене тытса илни çинчен те вулăпăр.

Совет воинĕсем нимĕç захватчикĕсене Сталинградпа Ленинград патĕнче аркатса тăкнă чухне те, нимĕçсем ишĕлтернĕ нумай хуласемпе пиншер ялсем витĕр тухса, нимĕç вăрă-хурахĕсене хĕвеланăçнелле хăваласа пынă чухне те çак ырă кун çинчен шутланă — фашистла нимĕç захватчикĕсене хăйсен вилĕм шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкма ĕмĕтленнĕ. Çав ĕмĕт пурнăçа кĕмелле пулнă, халĕ ĕнтĕ вăл пурнăçа кĕрсе пырать.

Акă пирĕн тăван воинсем, хăйсен аллинче совет ĕççыннийĕсем социализмлă промышленность предприятийĕсенче туптаса тунă хĕçпăшалсене тытса, Тăван çĕршывăн чикки урлă Хĕвелтухăç Пруссине иртеирте каяççĕ. Акă Хĕрлĕ Çар тытса илнĕ нимĕç хулисенчен пĕри — Эйдткунен хули. Ишĕлсе пĕтнĕ çуртсем. Анчах хулара тискер кайăксене çуратса ӳстернĕ луизăсем курăнмаççĕ, вĕсем совет хĕрарăмĕсен, совет ачи-пăчисен ылханĕнчен хăраса, упăшкисем совет çыннисене çаратса пухнă пурлăхĕсене пăрахса хăварсах, тухса тарнă.

Аса илеççĕ-ши халĕ нимĕç гретхенĕсемпе медхенĕсем хăйсен упăшкисемпе каччисем патне посылкăсем ыйтса çырнине, совет çыннисен юнĕпе вараланнă тумтирсене ытларах яма ыйтнине? Аса илчĕр. Эпир нимĕçсем çавна аса илессине тахçантанпах кĕтсе пурăннă. Антив, совет ачин юнĕпе вараланнă тумтире хăйĕн нимĕç текен çурине тăхăнтарса çӳренĕ, совет хĕрачисене хăйĕн патĕнче чура туса асап кăтартса усранă Луиза халĕ хуларан тарма ĕлкĕрчĕ пулсан, тартăр. Пурпĕрех эпир ăна тупатпăр. Совет воинĕсем нимĕçсен тĕп хулинче — Берлинра пур пĕрех пулаççĕ. Совет воинĕсен пульлинчен халлĕхе хăтăлнă пулсан та, вăл пăявран хăтăлаймĕ.

Вăрçă нимĕç хулисемпе ялĕсене çитсе кĕчĕ. Халĕ ĕнтĕ икĕ уралла тискер кайăксем хăйсен килĕсенче çапăçаççĕ. Антив, нимĕç вăрă-хурахĕсем вăрçă мĕне пĕлтернине хăйсен çĕрĕ çинче тӳссе пăхчăр.

Вăрçă ответлă тапхăра кĕчĕ. Нимĕç захватчикĕсем пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара хирĕç урса кайсах çапăçаççĕ. Анчах та, темĕнле хаяррăн хирĕç тăрсан та, вĕсен шăпи тулас кун çывхарса килет. Пирĕн тăван паттăр Хĕрлĕ Çар çынçиен тискер нимĕç кайăкне хăйĕн шăтăкĕнчех пуçĕпех çапса аркатĕ. Çакна кĕтетпĕр эпир, совет çыннисем, паян. Кĕтетпĕр çеç мар, çав савăнăçлă сехете çывхартассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлетпĕр. Хĕрлĕ Çар валли çĕнтерӳ хĕçпăшалне туптатпăр. Çĕнтерӳ сехетне çывхартассишĕн тырпул та, пахча-çимĕç те, укçа-тенкĕ те шеллеместпĕр. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, эпир, чăваш ĕççыннисем, Хĕрлĕ Çар фондне 500 пин пăт тырă патăмăр, темиçе çĕр пин пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç паратпăр. Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, эпир укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене нумай миллион тенкĕлĕх туянатпăр.

Пирĕн тырпулпа пахча-çимĕç, укçа-тенкĕ тăшмана вилĕм кӳме пулăштăр.

М. АНДГЕЕВСКИЙ.

Аслӑ шухӑшлавçӑ тата революционер

(Н. Г. Чернышевский вилнӗренпе 55 çул тултарнӑ май)

Аллӑ пилӗк çул каярах — 1889 çулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче — вырӑссен аслӑ шухӑшлавçи, революциллӗ демократ тата социалист Николай Гаврилович Чернышевский вилнӗ.

Чернышевский 1828 çулта Саратов хулинче çуралнӑ. Духовнӑй семинарире вӗренни ӑна çырлахтарма пултарайман, вӑл вара Петербургри университета вӗренме кӗнӗ. Пӗтӗм вӑйне хурса ӗçлесе, Николай Гаврилович калама çук анлӑ пӗлӳ туяннӑ. Вӑл Европӑри тӗп чӗлхесене, çавӑн пекех тата латин, грек, поляк, тутар чӗлхисене пӗлнӗ, перс, араб тата авалхи еврей чӗлхине вӗреннӗ. «Современник» журналта пичетленнӗ хӑйӗн статьисенче вӑл унчухнехи йӗркесене, ӗççыннисемшӗн тӑшманла пулса тӑракан шухӑшсемпе теорисене хаяррӑн критикленӗ. Обществӑна тарӑннӑн хумхантаракан çав статьясенче революциллӗ кӗрешӗве тухма чӗнни илтӗннӗ.

Патша йыттисем Чернышевскин революциллӗ ӗçне асӑрхамасӑр иртсе кайма пултарайман. 1862 çулта ӑна арестленӗ те, Петропавловски крепоçра икӗ çул хушши хупса усранӑ хыççӑн, каторгӑна янӑ. Анчах тӗрме те, нумай çул хушши Якутире ссылкӑра тытса усрани те çав çыннӑн кӗрешӳри вӑй-хӑватне хавшатма пултарайман. Вӑл хӑй пурнӑçӗн юлашки кунӗ çитиччен революциллӗ ӗçе пӗтӗм чун-чӗререн парӑнса тӑнӑ.

тӑнине çакӑнпа ӑнлантарса пама пулать те ӗнтӗ. Пурнӑçри явленисемпе ӗçсем çине кабинетран сӳрӗккӗн пӑхса ларнине Николай Гаврилович тӳсме пултарайман, вӑл, паллӑ класӑн представителӗ пулса тӑрса, кӗрешӗве ӑнлануллӑн тухнӑ. Историллӗ аталанура çӗнӗ самана çитрӗ, çав самана наукӑна ӗççыннисен класӗн интересӗсене палӑртакан наука пулса тӑма, халӑхшӑн ӗçлеме хушать, тесе шутланӑ вӑл. Историн çав çӗнӗ ыйтӑвӗсене тивӗçтерекен теори кӑна наука чӑнлӑхӗпе килӗштерме пултарать, тенӗ Чернышевский. Ытти кирек мӗнле теори те вара чӑн-чӑн пурнӑçран аякра тӑракан суя теори пулать.

Философире Чернышевский материализмӑн чи çирӗп те чаплӑ представителӗ пулса, идеализмӑн пӗр пӑркаланми тӑшманӗ пулса тӑнӑ. Вӑл, вырӑс философийӗнче активлӑ кӗрешекен революциллӗ материализмӑн принципӗсене наука енчен никӗслесе парса, тава тивӗçлӗ аслӑ ӗç тунӑ. Вӑл Ломоносов, Радищев, Белинский, Герцен ячӗсемпе çыхӑнса тӑракан материалистла традицисене малалла аталантарса пынӑ, вырӑс материализмне çӗнӗ пусӑма çӗкленӗ. Ансӑртран мар ӗнтӗ Ленин Чернышевскине питӗ пысӑка хурса хакланӑ. Чернышевский, материализма хӑйне май чаплӑн хӳтӗлесе, философири кивӗ тата çӗнӗ идеализма революциллӗ хӗрӳлӗхпе çивӗччӗн критиклесе, Хӗвеланӑç Европӑри нумай материалистсенчен чылай çӳлте тӑнӑ. Идеалистла реакциллӗ философие хирӗç тӑракан унӑн шухӑшӗсемпе ӑнланӑвӗсем тӗнчен социальнӑй никӗсне тӗпренех урӑхлатса йӗркелессишӗн пыракан политикӑллӑ кӗрешӳпе тачӑ çыхӑнса тӑнӑ.

Çак енчен пӑхсан, Николай Гаврилович нимӗççен XVIII-мӗш ӗмӗр вӗçӗнчи тата XIX-мӗш ӗмӗр пуçламӗшӗнчи идеалистла философине хӑй тӗллӗн критиклени çав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Çав критика вӑл нумай енчен Маркспа Энгельс каланисемпе пӗр пекех. Вӑл Кантпа Гегелӗн философири идеализмӗ вӗсен социаллӑ-политикӑллӑ шухӑшӗсен реакциллӗхӗпе çыхӑнса тӑнине кӑтартса панӑ. Кантӑн системине Чернышевский «пӑсӑк та хӑравçӑлла» система тенӗ, Гегелӗн общество пирки каланӑ шухӑшӗсене «ансӑр та вакӑ» шухӑшсем, «аялти пусӑмра тӑракан», «филистерла» пӑсӑк шухӑшсем тенӗ. Гегель диалектикин идеалистла никӗсне хирӗç вӑл материалистла ӑнланнӑ диалектикӑна тӑратнӑ.

Вӑл Маркс диалектикин виçине çити çӗкленеймен пулин те, явленисем историллӗ аталануран тухса тӑни, çӗннине туйса тӑрасси, общество вӗçи-хӗррисӗр малалла аталанса пынине вӗрентни Чернышевскин сочиненийӗсенче пур енлӗн те çав тери тарӑннӑн курӑнса тӑраççӗ. Кивӗ обществӑна хирӗç кӗрешес ӗçре диалектика аслӑ демократӑн хӗçпӑшалӗ пулнӑ. Вӑл хӑй каланӑ тӑрӑх, унӑн оптимизмӗ, вӑл пуласлӑх çине шанса та ӗненсе пӑхни ак çакна лайӑх ӑнланни çинче никӗсленсе тӑнӑ: кивви темӗнле тытӑнса юлма хӑтлансан та, вӑл хӑйӗн кунçулне темӗнле малалла тӑсма хӑтлансан та, пурнӑç хӑйӗннех тӑвать, вӑхӑт никам чарайми малалла вӑркӑнса пынӑ май мӗнпур реакциллӗ йӗркесене шӑлса пӑрахса хӑварать. «Антив, кирек те мӗн пултӑр, анчах юлашкинчен пурпӗрех пирӗн урамра праçник пулать», — Чернышевскин çакӑ чаплӑ сӑмахӗсем вырӑс революционерӗсен нумай ӑрӑвӗсене иксӗлми революциллӗ хастарлӑхпа хавхалантарнӑ.

Чернышевский наукӑри реакцие хирӗç, этем ӑс-хакӑлӗн вӑй-хӑватне хисеплеменнине хирӗç, обществӑна тӗпчесе вӗренес ӗçре шӑнса хытнӑ шухӑшсен принципӗсене çирӗплетсе лартма пӑхнисене хирӗç туха-туха каланисем прогрессиллӗ вӑйсемпе реакциллӗ вӑйсем хушшинчи кӗрешӗвӗн кашни çӗнӗ тапхӑрӗнче питӗ вырӑнлӑ та кирлӗ пулса тӑраççӗ. Хальхи тапхӑрта та, пирӗн тӑван çӗршыв историри чи хура вӑя — фашизма хирӗç аслӑ вӑрçӑра кӗрешнӗ чухне, аслӑ шухӑшлавçӑн вилӗмсӗр сочиненийӗсем прогресс вӑйӗсемшӗн, малалла пыракан вӑйсемшӗн ӗçлеççӗ. Общество аталанӑвӗн законӗсем çине хӑй мӗнле пӑхнине наука тӗлӗшӗнчен çирӗплетсе парас тесе, вӑл, уйрӑмӑн илсен, пӗр-пӗр расӑ тепӗр расӑран çӳлерех тӑрать тесе вӗрентекен теорисене аркатмаллах пыра-пыра çапнӑ, вӑл çав теорисем ухмахла тата нимӗн çинче те никӗсленсе тӑман теорисем пулса тӑнине, вӗсем мракобессен аллинчи хӗçпӑшал пулса тӑнине кӑтартса панӑ.

Чернышевский, хӑй вӑхӑтӗнчи Российӑн условийӗсене кура, общество çине идеалистла пӑхассинчен вӗçне çитиччен хӑтӑлса çитеймен пулин те, историе материалистла ӑнланса илес тӗлӗшпе малалла чылай пысӑк утӑм тунӑ. Экономикӑллӑ тӗрлӗ интерессем хыçӗнче тӗрлӗ классем тӑнине ӑнланни унӑн шухӑшӗсен питех те паллӑ енӗ пулса тӑрать. Общество тӗрлӗ классенчен тытӑнса тӑнине тата классен кӗрешӗвӗ обществӑна аталантаракан вӑй пулса тӑнине ӑнланса илни Чернышевские хӑй вӑхӑтӗнчи Российӑри тата хӗвеланӑçӗнчи политикӑллӑ явленисене материалистла тарӑннӑн пӑхса тухса хаклама пулӑшнӑ. Ун чухнехи событисем (Российӑра хресченсем тӗлӗшпе реформа йышӑнасси, Америкӑри граждӑн вӑрçи т. ыт. те) конкретлӑн мӗнле пулса пырассине вӑл малтанах тӗлӗнмелле витӗр курса тӑнӑ, вӑл историллӗ тата экономикӑллӑ ыйтусене классем тӗлӗшпе чаплӑ анализ туса чылай сочиненисем çырса кӑларнӑ. Российӑн тӗп тӑшманӗ — крепостничество, патша самодержавийӗ пулнине Чернышевский пӗлнӗ. Çавӑнпа та вӑл революциллӗ демократсем крепостничествӑна хирӗç кӗрешнине пуçарса пынӑ, хӑйӗн сочиненийӗсенче вӑл хресченсен революцийӗн идейине тӑтӑшах малалла илсе пынӑ. Унӑн ӗçӗ пӗр çирӗп çулйӗрпе пынӑ. Çакӑ вӑл — политикӑллӑ влаçа халӑх аллине куçарассишӗн кӗрешесси пулнӑ. Власть самодержави аллинче тытӑнса тӑнӑ чухне социаллӑ тарӑн улшӑнусем çинчен сӑмах та пулма пултарайманнине вӑл никамран та лайӑх пӗлнӗ. Государствӑна пуç пулса тӑракан классен чи хӑватлӑ хӗçпӑшалӗ вырӑнне хурса хакласа, Чернышевский либераллӑ-реформистла шухӑшсен представителӗсене вӗсем хӑравçӑ пулнишӗн, унчухне пуç пулса тӑракан классемпе йӑпӑлтатнишӗн тата политикӑллӑ власть çинчен тӑракан тӗп ыйтӑва лартма кӑмӑлламаннишӗн питленӗ.

Николай Гаврилович аслӑ демократ кӑна мар, вӑл, Ленин каланӑ тӑрӑх, «вырӑссен аслӑ социалисчӗ» те пулнӑ. 60-мӗш çулсенче Чернышевский пуç пулса тӑнӑ ирӗклӗхшӗн пыракан революциллӗ юхӑма кайран вырӑс рабочийӗсемпе хресченӗсем малалла аталантарса пычӗç. Большевиксен партийӗ ертсе пынипе вӗсем социализм çулӗпе малалла кайрӗç, Чернышевский ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсене пурнӑçа кӗртрӗç. Чернышевский çав ӗмӗтсене наука енӗпе ярӳççӑн çутатса пама пултарайман. Çакна ӑна марксистсем, ленинецсем турӗç. Анчах вырӑссен XIX-мӗш ӗмӗрти ирӗклӗхшӗн пыракан юхӑмӗн социалистла традицийӗсем, аслӑ шухӑшлавçӑн тата халӑх ирӗклӗхӗпе телейӗшӗн кӗрешекенӗн ӗçӗнче çӗнӗ хӑватпа сарӑлса кайнӑскерсем, рабочи класпа хресченсем социализмшӑн çӗнтерӳллӗн кӗрешнӗ çӗрте паллӑ пусӑм пулса тӑчӗç.

Вилес умӗн нумаях мар малтан Чернышевский хӑйӗн çырӑвӗсенчен пӗринче çапла каланӑ: «Эпӗ тӑван çӗршывшӑн лайӑх ӗçлерӗм, çавӑнпа та манӑн тӑван çӗршыв умӗнче хисепре пулма тивӗç пур», тенӗ. Пирӗн çӗршывра Николай Гаврилович Чернышевскин ячӗ кашни совет çыннин чӗришӗн хаклӑ. Вӑл каланӑ пек, ӑна Тӑван çӗршыв пирӗн кунсенче чи пысӑк хисепе хурса хаклани çакӑ пулса тӑрать: пирӗн халӑх, гитлерла Германие хирӗç хаяррӑн кӗрешсе пырса, аслӑ Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхне хӳтӗлесе хӑварчӗ. Николай Гаврилович Чернышевский халӑх ирӗклӗхӗпе телейӗшӗн кӗрешнӗ, çав ӗçе хӑйӗн мухтавлӑ пурнӑçне панӑ.

М. РОЗЕНТАЛЬ.

РЕСПУБЛИКӐРИ РАЙОНСЕМ АВӐН ÇАПМАЛЛИ ПЛАНА ОКТЯБРӖН 25-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авӑн çапнӑ	Вӑрлӑхлӑх акнӑ кураксене çапса шӗкӗлченӗ
1. Курачӑк	99,7	100,0
2. Йӗпреç	98,5	46,1
3. Ишлей	98,0	65,3
4. Элӗк	97,4	71,9
5. Шупашкар	97,3	84,4
6. Çӗрпӳ	96,9	92,6
7. Шӑхасан	96,5	73,3
8. Калинино	95,9	34,7
9. Муркаш	95,5	97,3
10. Пӑрачкав	94,0	18,2
11. Красноармейски	93,8	79,4
12. Сӗнтӗр	93,5	86,4
13. Вӑрмар	93,4	53,1
14. Канаш	93,3	51,4
15. Шӑмӑршӑ	93,3	85,7
16. Елчӗк	93,1	82,3
17. Вӑрнар	93,0	56,0
18. Куславкка	92,4	65,0
19. Первомайски	90,9	35,5
20. Октябрьски	90,8	57,8
21. Хӗрлӗ Чутай	90,3	48,5
22. Сӗнтӗрвӑрри	89,9	85,0
23. Çӗмӗрле	89,6	52,5
24. Етӗрне	87,9	19,7
25. Советски	85,8	27,3
26. Улатӑр	80,9	66,3
27. Чкаловски	79,1	37,0
28. Комсомольски	77,6	20,9
29. Тӑвай	77,5	23,0
30. Кувакино	77,2	—
31. Шупашкар хули	97,2	—
Чӑваш АССР тӑрӑх	91,3	57,5

РЕСПУБЛИКӐРИ РАЙОНСЕМ КӖРХИ ÇӖРТМЕ ТУМАЛЛИ ПЛАНА ОКТЯБРӖН 25-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа)

Районсем	Кӗрхи çӗртме тунӑ
1. Вӑрнар	103,7
2. Шупашкар	100,0
3. Сӗнтӗрвӑрри	100,0
4. Октябрьски	100,0
5. Муркаш	99,3
6. Çӗрпӳ	97,1
7. Красноармейски	92,9
8. Вӑрмар	92,0
9. Курачӑк	92,0
10. Элӗк	91,3
11. Куславкка	90,6
12. Сӗнтӗр	87,3
13. Етӗрне	84,9
16. Елчӗк	74,1
15. Шӑхасан	80,9
14. Калинино	83,4
17. Ишлей	72,8
18. Советски	72,5
19. Канаш	70,1
20. Хӗрлӗ Чутай	60,2
21. Йӗпреç	58,4
24. Комсомольски	53,1
22. Первомайски	56,8
23. Шӑмӑршӑ	53,8
25. Çӗмӗрле	46,9
26. Чкаловски	41,7
27. Тӑвай	39,0
29. Пӑрачкав	26,1
28. Улатӑр	29,9
30. Кувакино	13,7
31. Шупашкар хули	107,2
Чӑваш АССР-ӗ тӑрӑх	71,7

Асӑрхаттарни: Чкаловски район тӑрӑх 1944 çулхи октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне панӑ цыфрӑна кӑтартнӑ.

МОТОРСӐР КОМБАЙН

СССР Совхозсен Халӑх Комиссариачӗ П. В. Иванов тунӑ йышши комбайнсем тума заказ панӑ. Çав комбайн хальхи комбайнсенчен çӑмӑлтарах, ун çинче мотор тата ытти кӑткӑс пайсем çук. Вӗсем тӑвакан ӗçе комбайнӑн тӗп пайӗсемех (хедер, параппан, мотовило) туса тӑраççӗ, е вӗсем вырӑнне простой та çӑмӑлтарах пайсем туса лартнӑ.

Çав комбайна ӗçлеттерсе пӑхнӑ та вӑл лайӑх ӗçлени палӑрнӑ. СССР Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн комиссийӗ çӗнӗ машинӑна питӗ лайӑх тесе хакланӑ. (ТАСС).

Уинстон Черчилль общинӑсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Черчилль паян общинӑсен палатинче Мускаври калаçусем çинчен каласа панӑ. Черчилль çапла каланӑ:

«Вӑрçӑн хальхи тапхӑрӗ — йывӑр тапхӑр, çапӑçусем пур фронтсенче те аслӑланса тата вӑйланса пырассине кӗтме пулать. Эпир вӑрçӑн юлашки тапхӑрӗнче пурӑнатпӑр тесе шутлатпӑр. Анчах та çак кӗрешӳ вӑл çакӑн пекскер: вӗçне çитиччен пӗтӗм вӑя хурса кӗрешмесен, унӑн вӗçӗ ытла та вӑраха кайма пултарать, вӑл çав тери вӑраха кайни нумай вӑхӑт хушши кӗрешнӗ хыççӑн пуçарулӑха хӑйсен аллине илнӗ çӗршывсемшӗн тӳсме çук пекех пулса тӑма пултарать.

Тӑшманӑн икӗ шанчӑк пур. Пӗрремӗш шанчӑк — вӑрçа тӑсса пырса, пирӗн çапӑçас шухӑш-кӑмӑла хавшатма шанни. Иккӗмӗш, малтанхинчен пысӑкрах шанчӑк — хӑйпе атакӑлакан виçӗ çӗршыв хушшинче хирӗçӳсем сиксе тухассине шанни: çав çӗршывсен малалла пыракан пӗрлӗхӗ унӑн хӑйӗн кунçулне татса парать». «Тӑшманӑн аслӑ шанчӑкӗ çаваӑ ӗнтӗ,— тенӗ Черчилль, — çавӑнпа пирӗн хамӑрӑн пӗтӗм вӑя пӗр чарӑнмасӑр шӑп çав шанчӑка пӗтерсе лартас ӗçе парса пымалла».

«Эпӗ палатӑна çакӑн çинчен савӑнса пӗлтеретӗп, — тенӗ Черчилль: — Совет Союзӗпе Великобритани хушшинчи çыхӑнусем хальхи вӑхӑтра нихçанхинчен те тачӑрах та кӑмӑллӑрах пулса пыраççӗ...

Мӗн пирки те пулсан килӗшмесен, эпир кашни мӗншӗн килӗшейменнине ӑнланатпӑр, пӗр-пӗрин шухӑшне ӑнланса илме пултаратпӑр. Анчах та питӗ йышлӑ ыйтусем пирки, вӗсем çине тӗрлӗ енчен пырса пӑхнине шута илсе каласан, тӗлӗнмелле йышлӑ ыйтусем пирки эпир пӗтӗмпех калаçса татӑлтӑмӑр. Паллах ӗнтӗ, эпир гитлерла Германие хирӗç вӑрçас ӗçре ӑна пӗтӗмпех çӗнтеричченех пӗрлешнӗ тата çав задачӑна пурнӑçа кӗртмешкӗн хамӑр вӑй-хӑватӑн мӗнпур ресурсӗсемпе вӗçне çитиччен пӗрле усӑ курас ыйту тӗлӗшпе те пӗрлешнӗ. Нимӗçсен чӗринче хӑйсене хупӑрласа илекен, хӑйсене пӗтерсе лартакан вӑйсем хушшинче пӗчӗк хирӗçӳсем те пулин сиксе тухассине е çав вӑйсем хавшассине шанасси пӗтӗмпех пӗтсе лартӑр». Черчилль тата çапла каланӑ: Балкан ыйтӑвӗсем пирки эпир пӗтӗмпех калаçса татӑлтӑмӑр, тенӗ.

Мускаврa сӳтсе-явнӑ вӑрçӑ ыйтӑвӗсем çинчен Черчилль çапла каланӑ: «Паллах ӗнтӗ, эпӗ çав калаçусем е решенисем çинчен нимӗн те каласа пама пултараймастӑп, эпӗ çакна çеç калама пултаратӑп: эпӗ вӗсене питӗ лайӑх решенисем тесе шутларӑм, вӗсем Европӑна вӑрçӑ инкекӗсенчен хӑвӑртрах çӑлса кӑларас тӗлӗшпе йышӑннӑ чи лайӑх решенисем пулса тӑраççӗ тесе шутларӑм».

Польша ыйтӑвӗ çинчен Черчилль çапла каланӑ: «Эпӗ юлнӑ йывӑрлӑхсене пӗчӗклетсе кӑтартмастӑп пулин те, çакӑн çинчен савӑнса калатӑп: Англи, Совет Российи тата, эпӗ кун пирки пӗртте иккӗленместӗп, Пӗрлешӳллӗ Штатсем вӑйлӑ, ирӗклӗ, никама пӑхӑнман, хӑйӗн ирӗкӗпе пурӑнакан Польшӑна, союзниксем тӗлӗшпе килӗшӳллӗ политика тытса пыракан тата хӑйӗн аслӑ кӳршипе, хӑйне ирӗке кӑларакан Российӑпа туслӑн çыхӑнса тӑракан Польшӑна çӗнӗрен ура çине тӑратма кирли çинчен çирӗп калаçса татӑлчӗç».

Черчилль унтан Францири лару-тӑру çинчен каланӑ, юлашкинчен вара Грецири лару-тӑру çинчен каласа панӑ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ТИСКЕР ӖÇӖСЕМ ÇИНЧЕН ГАРРИМАН КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран пӗлтернӗ тӑрӑх, Пӗрлешӳллӗ Штатсен Совет Союзӗнчи посолӗ Гарриман пресс-конференцире çапла каланӑ: нимӗçсем Совет Союзӗн оккупациленӗ районӗсенче те, Польшӑра та тискер ӗçсем тунине пӗчӗклетсе кӑтартма май çук. Америка халӑхӗ нимӗçсем мӗн тери тискер ӗçсем тунине лайӑх ӑнланса илеймест-ха. Вырӑссемпе поляксен тыткӑна лекнӗ çыннисене нимӗçсем мӗнле майпа асаплантарни тата вӗлерни çинчен каласа панӑ чухне вӗсене ӳстерсе кӑтартма çук. Нацистсем вӗлернӗ çынсен хисепӗ пирки цифрӑсем тӗрлӗ пулма пултараççӗ, анчах та çав цыфрӑсем тӗрлӗ пулни вӑл гитлеровецсем халӑха йышлӑн вӗлернӗ майсен хӑрушлӑхӗ умӗнче нимӗн те мар.

«ФИНЛЯНДИ — СОВЕТ СОЮЗӖ» ЯТЛА ОБЩЕСТВО ФИНЛЯНДИ ХАЛӐХНЕ ЧӖНСЕ КАЛАНИ

ХЕЛЬСИНКИ, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Хельсинкире тухакан хаçатсенче «Финлянди — Совет Союзӗ» ятлӑ общество Финлянди халӑхне чӗнсе каланине пичетлесе кӑларнӑ.

«Совет Союзӗн хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсем çав тери чаплӑ çӗнтернине пула, Финлянди унта нацистсен влаçӗ пулса тӑрассинчен хӑтӑлчӗ, — тенӗ çав чӗнсе каланинче. — Демократиллӗ йӗрке туса хурасси тата перемири пирки тунӑ килӗшӗве пурнӑçа кӗртесси Финлянди халӑхӗн чи паха задачи пулса тӑраççӗ.

«Финлянди — Совет Союзӗ» ятлӑ общество Финляндипе Совет Союзӗ хушшинчи çыхӑнусене икӗ çӗршывӑн халӑхӗсем ытнӑ пек аталантарса пырӗ».

Общество Финлянди халӑхне хӑйне ӗçре пулӑшса пыма тата Финляндин мӗнпур пайӗсенче обществӑн вырӑнти отделенийӗсене уçса, обществӑн шухӑшӗсене сарма пулӑшма чӗнет.

СОФИЯ ХУЛИНЧЕ БОЛГАРИПЕ СОВЕТ СОЮЗӖ ХУШШИНЧИ КУЛЬТУРӐЛЛА ÇЫХӐНУ ОБЩЕСТВИНЕ ТӐВАÇÇӖ

СОФИЯ, октябрӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). София хулинче Болгарипе Совет Союзӗ хушшинчи культурӑллӑ çыхӑну обществине тӑвас тӗлӗшпе организациллӗ комитет тунӑ. Çав комитет ӗçлеме пуçланӑ ӗнтӗ.

Организациллӗ комитет çутӗç, наука тата общество организацийӗсенче хуласемпе ялсенче Болгарипе Совет Союзӗ хушшинчи культурӑллӑ çыхӑну обществисем тӑвас ӗçре пулӑшма чӗннӗ.

Организациллӗ комитета профессор Дончо Костов, «Рабочисен ӗçӗ» ятлӑ хаçатӑн редакторӗ пулнӑ Крум Кюлявков тата ыттисем те кӗнӗ.

Софире совет кӗнекисен библиотеки уçӑлнӑ, çак кунсенче вуламалли зал уçӑлать.

Хӗвеланӑç Европӑри вӑрçӑ ӗçӗсем

ЛОНДОН, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре çапла каланӑ:

Гертогенбош хулин пысӑк пайӗ союзниксен аллинче тӑрать. Союзниксен çарӗсем фронтӑн пӗтӗм участокӗнче малалла кайнӑ, вӗсем тӑшманӑн Гертогенбошпа Тильбург хулисем патӗнче пуçланса каякан оборона сооруженийӗсенчен иртсе кайса нумай шала кӗнӗ.

Хаяррӑн çапӑçнӑ хыççӑн тӑшман фронтӑн Розендаальпе Тильбург хушшинчи пӗтӗм участокӗнче каялла чакнӑ. Союзниксен чаçӗсем хӗвелтухӑçпе кӑнтӑр енче Тильбург хулипе пӗрлешсе ларнӑ ялсенче тӑраççӗ.

Союзниксен çарӗсем Бевеланд çурутравӗ çинче малалла кайнӑ. Леопольд каналӗн районӗнче вӗсем Оостбургра çапӑçаççӗ, Греде хулинчен çурçӗр тата кӑнтӑр енӗпе пырса иртсе кайнӑ.

Аахен хулинчен çурçӗртерехре союзниксен çарӗсем, тӑшман вӑйлӑ хирӗç тӑнине çӗнтерсе, кӑшт малалла кайнӑ.

Люневиль хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре союзниксем Монкур вӑрманне тата çав вӑрмантан çурçӗртерехри çӳллӗ вырӑна нимӗçсенчен тасатнӑ. Люневиль районӗнче тӑшманӑн темиçе контратакине сирсе янӑ.

Эпиналь хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре союзниксен чаçӗсем, нимӗçсем хаяррӑн хирӗç тӑнине çӗнтерсе, малалла куçса пынӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Рейн облаçӗнчи объекчӗсене атакӑланӑ.

ГЕРМАНИРИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ÇИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑ çапла пӗлтернӗ: ӗнер Америкӑн 1.200 йывӑр бомбардировщикӗ ытла, 650 истребитель хӳтӗлесе пынипе, Билефельдри, Мюгстерти, Ганноверти тата Германин ытти хулисенчи промышленность объекчӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Вӑтаçӗр тинӗс таврашӗнче

ЛОНДОН, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаçӗр тинӗс таврашӗнчи хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре çапла каланӑ:

8-мӗш арми чаçӗсем анлӑ фронтпа Ронко шывӗ патне пырса тухнӑ; патрульсем темиçе тӗлте çав шыв урлӑ каçса кайнӑ та ӗнтӗ.

Болонья районӗнче 5-мӗш армин малти чаçӗсем кӑшт малалла кайнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Грецире союзниксен çӗр çинчи çарӗсем, Греци партизанӗсемпе çыхӑнса кӗрешсе, тӑшманӑн Ларисса районӗнчи тылри позицийӗсене атакӑланӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Грецири, Австрири тата Албанири вӑрçӑ объекчӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ.

ВЕНӐРА ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ХӐРАСА ӲКНӖ

СТОКГОЛЬМ, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Скандинавири телеграф агентстви çапла пӗлтерет: Венӑра нимӗçсем хӑраса ӳкнӗ. Гитлеровецсем хӑйсем Гитлер партийӗн членӗ пулнине пытарма хӑтланаççӗ, хӑйсен значокӗсене çакса çӳрессӗн мар. Нимӗçсем нумайӗшӗ Венӑран Германие тараççӗ.

Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçӑ

ФИЛИППИН УТРАВӖСЕНЧЕН ХӖВЕЛТУХӐÇНЕРЕХРЕ АМЕРИКӐПА ЯПОНИ ФЛОЧӖСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУЛСА ИРТНӖ ÇАПӐÇУ

ЛОНДОН, октябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Лӑпкӑ океан çинчи флочӗн штабӗ çапла пӗлтернӗ: Филиппин утравӗсен районӗнче пулса иртнӗ çапӑçу вӑхӑтӗнче Америкӑн авианосецсем çинчи самолечӗсем Японин пӗр авианосецне шыва путарнӑ, ытти 2 пысӑк авианосецне тата 5 е 6 çар карапне, вӑл шутра пӗр крейсера, сиенленӗ.

Америка флочӗн «Принстон» ятлӑ авианосецӗ путнӑ. Авианосец капитанне тата авианосецӑн 1.360 офицерӗпе матросне çӑлса хӑварнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тӗнчери лару-тӑру

Великобританин премьер-министрӗ Черчилль тата ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Иден Мускава килнӗ вӑхӑтра калаçнисем ӑнӑçлӑ пулни çинчен ют çӗршывсенчи пичет халӗ те анлӑн сӳтсе-явать. Мускаври калаçусем пирки çавӑн пек нумай çырнине ӑнланмалла та ӗнтӗ, мӗншӗн тесен çав калаçусем Англипе Совет Союзӗ хушшинчи çыхӑнусен историне калама çук паха тапхӑр пулса кӗрсе юлӗç. Çакӑнпа пӗрлех вӑл калаçусем гитлеризма хирӗçле коалицие малалла тӗреклетме, союзлӑ аслӑ çӗршывсен çапӑçури туслӑхне ӳстерме пулӑшӗç.

Пичетлесе кӑларнӑ коммюникерен çакӑ уççӑнах курӑнса тӑрать: гитлерла Германие хирӗç пыракан кӗрешӳре союзлӑ çӗршывсем пӗр шухӑшлӑ пулнине, вӗсем тӑшмана унӑн хӑйӗн шӑтӑкӗнче çапса çӗмӗрме пӗр пӑркаланмасӑр ӗмӗтленнине Мускаври калаçусем çирӗплетсе пачӗç, Польша ыйтӑвне татса парас тӗлӗшпе те чылаях пысӑк ӳсӗмсем тунӑ. Калаçусем икӗ çӗршывӑн шухӑшӗсем хушшинчи уйрӑмлӑха чылаях чакарчӗç, пӗр-пӗрне ӑнланманнисене сирсе ячӗç.

Канашлура кӑнтӑр-хӗвелтухӑç Европӑри ӗçсемпе çыхӑнса тӑракан ыйтусене сӳтсе явса татса панӑ. Болгарипе перемири тумалли условисем пирки, çавӑн пекех тата Югославири пӗрлехи политика çинчен калаçса татӑлнӑ.

Мускаври калаçусем ӑнӑçлӑн вӗçленни союзлӑ çӗршывсен хальхи вӑрçӑн тӗп тӗллевне — гитлерла вӑрӑ-хурахсен ушкӑнне аркатса пӗтерсе тӑкас тӗллеве—пурнӑçа кӗртессишӗн пыракан кӗрешӳри пӗрлӗхне кӑна мар, вӑрçӑ хыççӑн нумая пыракан çирӗп мир тӑвас ӗçри пӗрлӗхне те кӑтартса пачӗ. Совет Союзӗпе Англи правительствисен руководителӗсем тӗл пулнин, США правительствипе калаçса татӑлнӑ тата вӑл ырланӑ тӑрӑх пулнӑ тӗлпулӑвӑн, итогӗсем çакна кӑтартса параççӗ: аслӑ çӗршывсем вӑрçӑ пынӑ вӑхӑтра тухса тӑракан кӑткӑс ыйтусене пурне те кирлӗ пек татса пама тӑрӑшаççӗ тата татса пама пӗлеççӗ те.

Гитлеризма хирӗçле коалици çирӗп никӗс çинче тытӑнса тӑни халӗ ӗнтӗ пӗтӗм тӗнчешӗн паллӑ. Çав коалици вӑрçӑн йывӑр испытанийӗсене тӳссе ирттерме пултарчӗ. Вӑл вара вӑрçӑ хыççӑнхи тӗп задачӑна та—çирӗп тата нумая пыракан мир тӑвас задачӑна та ӑнӑçлӑн татса пама тивӗçлӗ.

Мускаври калаçусем хыççӑн пулса иртнӗ вӑрçӑ ӗçӗсем пӗрлешӳллӗ нацисен çапӑçури туслӑхӗ ӳссе пынине кӑтартса паракан чи лайӑх тӗслӗхсем пулса тӑчӗç.

Союзниксен пӗр шухӑшлӑхне тата вӗсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗçленине уççӑн кӑтартса паракан тӗслӗх—союзлӑ çӗршывсем Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствине йышӑнни пулса тӑрать. Франци халӑхӗ хӑйӗн вӑйӗсене пӗтӗçтерес çулпа шанчӑклӑн малалла утать. Ирӗклӗ пурнӑçа çӗнӗрен туса хумалли, пӗрлехи тӑшмана хирӗç пыракан кӗрешӗве татах та активлӑнрах хутшӑнмалли çул халӗ ӗнтӗ Франци халӑхӗшӗн çӗнӗрен уçӑлчӗ.

* * *

Иртнӗ эрне гитлерла Германие хирӗç пыракан вӑрçӑ фрончӗсенчи пысӑк та паха ӗçсемпе паллӑ пулса тӑчӗ. Хӗрлӗ Çар, тӑшманӑн нумай вӑхӑтлӑха тунӑ оборонине татса, Хӗвелтухӑç Прусси çӗрӗ çине кӗрсе кайрӗ, халӑх пурӑнакан 400 пункта ытла туртса илчӗ тата, тӑшман урса кайсах хирӗç тӑнине пӑхмасӑр, малалла ӑнӑçлӑ наступлени туса пырать. Кӑнтӑрта Трансильвание пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ, нимӗçсене Чехословаки çӗрӗ çинче вӑйлӑн пырса çапнӑ. Совет çарӗсем Венгрире тата Югославире çаплах малалла куçса пыраççӗ. Çурçӗрте Хӗрлӗ Çар СССР Союзӗпе Норвеги хушшинчи государство чикки урлӑ каçса кайрӗ, нимӗçсенчен Киркенес портне туртса илнӗ. Çапла вара Норвегие ирӗке кӑларас ӗçе пуçласа янӑ. Хӗвеланӑçӗнче Англипе Америка çарӗсем гитлеровецсене вӑйлӑраххӑн та вӑйлӑраххӑн хӗссе пыраççӗ. Союзниксем нимӗçсен Аахен ятлӑ пысӑк хулине туртса илнӗ. Голландире халӗ те вӑйлӑ çапӑçусем пыраççӗ.

«Маневрсем тумалли» майсене нимӗçсем тахçанах ӗнтӗ çухатрӗç. Вӗсем çухатнӑ кашни позици вӑл — фронтӑн çӗнӗ участокӗсенче вӑрçӑ Германи чиккисем патне çывхарса пынине, е Германин хӑйӗн çӗрӗ çинче вӑрçӑ малалла сарӑлса пынине пӗлтерет. Тӑшман вӑйлӑрах хирӗç тӑма тытӑннине, вӑл хӑйӗн позицийӗсене кирек мӗнле пулсан та тытса тӑма хӑтланнине çакӑнпа ӑнлантарса памалла та ӗнтӗ. Çавна пулах нимӗçсем хӑйсен юлашки вӑйӗсемпе резервӗсене васкасах мобилизацилеççӗ, Германин пӗтӗм халӑхне çапӑçӑва туртса кӗме хӑтланаççӗ, ӑна гитлерла ушкӑнпа пӗрле вӗçне çитмех илсе пыма тӑрӑшаççӗ.

«Фольксштурм» (халӑх ополченийӗ) туни çӗршыва хӳтӗлеме кӑна мар, шалти политика тӗллевӗсемшӗн те кирлӗ тесе сӳпӗлтетсе, гитлеровецсем хӑйсемех хӑйсен шухӑшне каласа параççӗ. Фашистла «комментаторсенчен» пӗри ним пытармасӑрах çапла каланӑ: «эсэсовецсем 1939 çултах ӗнтӗ хӑйсен хыçӗнче юлакан пур кӗперсене те çунтарса янӑ, халӗ вара вӗсем пурне те хӑйсем хыççӑн илсе кайӗç», тенӗ. Гитлерла пуçлӑх Лей: «фольксштурм» тунӑ хыççӑн Германири ют çӗршыв рабочийӗсем «пӑлхав тума никӗс» çуккине курса ӗненӗç, тенӗ. Союзниксен çарӗсем Германин пурнӑç центрӗсем патне çывхарса пынӑ май ют çӗршывсенчен вӑйпа илсе килнӗ чурасен нумай миллионлӑ çарӗ ытларах та ытларах хӑрушӑ пулса тӑнине гитлеровецсем ӑнланаççӗ. Çакӑ вӑл фашистсен пуçлӑхӗсене питӗ шиклентерет. Ахальтен мар ӗнтӗ «фольксштурм» тӳрех фашистсен партине пӑхӑнса тӑрать; фронт валли тупӑ какайӗ парас тесе кӑна мар, Германи тылӗнче палӑракан кӑмӑлсӑрлӑха путарса лартас тесе те фашистсен партийӗ «фольксштурма» хӑйӗн аллинче тытса тӑма тӑрӑшать.

Фашистла нимӗç пропаганди Бонапарта хирӗç тӑма нимӗçсене организацилекенсенчен пӗри — Шарнгорст пирки каçӑхса кайсах кӑшкӑрать. Гитлеровецсем Испанин ирӗклӗхшӗн пынӑ кӗрешӗвне аса илеççӗ, Германин хальхи лару-тӑрӑвӗпе Наполеон оккупацийӗ вӑхӑтӗнчи Испани лару-тӑрӑвӗ «пӗр пек» пулнӑ теме кӑнттамӑн хӑтланаççӗ.

Пӑчланса ларас патне çитнӗ агрессор, тивӗçлипе ответ тыттарассине чӗтресе кӗтсе тӑраканскер, Наполеон агрессине хирӗç хӑйӗн ирӗклӗхӗшӗн кӗрешнӗ Испанин илемлӗ тумӗпе витӗнме хӑтланать. Гитлеровецсем Германи ют çӗршывран тапӑннине хирӗç тӗрӗслӗхлӗ вӑрçӑ туса пынӑ ӗлӗкхи вӑхӑтсене аса илме хушаççӗ. Анчах çаксем вӗсем халӗ ниепле те вырӑнлӑ мар...

Гитлеровецсем çавӑн пек кӑшкӑрашнине кам та пулин чӑнласах йышӑнӗ тата кӑшкӑрашни лару-тӑрӑва çӑлса хӑварма пулӑшӗ тесе шутлама хӑрушлӑха кӗрсе ӳксе çухалса кайнӑ çынсем кӑна пултараççӗ. Çапах та, çавӑн пек кӑшкӑрашни гитлеровецсем вӑрçа мӗн май пур таран ытларах тӑсма хӑтланнине кӑтартса парать. Вӑрçа ытларах тӑсас тесе, фашистла вӑрӑ-хурахсем темӗн тума та хатӗр.

Панкрута тухнӑ фашистла авантюристсене вилӗмрен нимӗн те çӑлса хӑварас çук-кипе ӗнентерсе тӑни кирлех те мар пулӗ. Союзлӑ çӗршывсен тата ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсен гитлерла вӑрӑ-хурах йӑвине аркатса тӑкма çителӗклӗ таранах вӑй та, хатӗрсем те пур.

* * *

Гитлерла Германи халӗ ӗнтӗ пӗр-пӗчченех тӑрса юлчӗ теме те пулать. Чӑннипе илсен, текех ӗнтӗ гитлерла блок çук. Венгрие Германин ахаль администрациллӗ единици туса хунӑ. Анчах пӗтсе ларас кун мӗн чухлӗ ытларах çывхарса килет, гитлеровецсем тулашри политикӑра юлнӑ хӑйсен позицийӗсенчен çавӑн чухлӗ çирӗпрех çакланма тӑрӑшаççӗ, хӑйсен преступникла тӗллевӗсене пурнӑçа кӗртес ӗçре халӗ те «нейтралитет» ялавӗпе витӗнсе фашистла нимӗç вӑрӑ-хурахӗсене пулӑшса пыракан государствӑсемпе çавӑн чухлӗ анлӑнрах та туллинрех усӑ курма тӑрӑшаççӗ.

Ансӑртран мар ӗнтӗ халӗ союзлӑ çӗршывсен пур хаçачӗсем те Франко Испанийӗн политики çине, çак çӗршывра гитлеровецсем хӑйсен ӗçне активлӑлатни çине вӑйлӑн çавӑрӑнса пӑхаççӗ. Нимӗçсем унта укçа-тенкӗ куçараççӗ, ӑна Испани промышленноçне хураççӗ, пӗтӗм предприятисен оборудованийӗсене те куçараççӗ. Гитлеровецсем полицие те сӑрхӑнса кӗрсе кайнӑ, çӗршывӑн шалти пурнӑçне контрольлесе тӑраççӗ, хӑйсен хӗçпӑшаллӑ отрячӗсене тӑваççӗ.

Гитлеровецсем ют çӗршывра базӑсем тума хӑтланни вӗсем, хальхи вӑрçа пурӑнса ирттерсе, хӑйсене çӗмӗрсе тӑкасран çӑлӑнса юлма хӑтланни çинчен каласа парать. Анчах çавӑн пек хӑтланнисенчен нимӗн те тухмӗ. Союзлӑ аслӑ çӗршывсем, ирӗклӗхе юратакан пӗтӗм этемлӗх нимӗç захватчикӗсене çӗмӗрсе тӑкас ӗçе пурпӗрех вӗçне çитерӗç.

Я. ВИКТОРОВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрӗн 29-мӗшӗпе 30-мӗшӗнче «ПОДВОДНАЯ ЛОДКА Т—9» ятлӑ саслӑ, илемлӗ фильм кӑтартать.

Сеанссем çак вӑхӑтра пуçланаççӗ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ӗçлеме пуçлать.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи Кинофикаци управленийӗ саслӑ кино механикӗсене вӗрентсе кӑларакан Хусанти курса вӗренме илесси çинчен пӗлтерет.

Курса 14 çултан çамрӑк мар арçынсемпе хӗрсене, 5-мӗш класран вӗренсе тухнисем чухлӗ пӗлекеннисене илеççӗ.

Заявленисене октябрӗн 30-мӗшӗччен йышӑнаççӗ. Заявленисемпе пӗрле çакӑн пек документсем ямалла: 1) миçе çул вӗреннине кӑтартакан свидетельство, 2) хӑçан çуралнине кӑтартакан свидетельство, 3) сывлӑх пирки панӑ справка.

Курсра 4 уйӑх вӗренмелле. Ноябрӗн 5-мӗшӗнче вӗрентме пуçлаççӗ.

Курса илнисене, мӗнле вӗреннине кура, 140 тенкӗрен пуçласа стипенди параççӗ.

Апат тӗлӗшӗнчен курсра вӗренекенсене ремесло училищисенче вӗренекеннисемпе танлаштарнӑ.

Адрес: гор. Чебоксары, Кинотеатр. Тел. 5—64.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи Кинофикаци управленийӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑç пайӗн 3—99, промышленноçпа ялхуçалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00765. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.